Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 АВГУСТ 24 ЙУНКУН 195 (5008) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухат̆ | ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ | Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 6—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—88, йалхуҫалӑх пайӗн—4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлӗннӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн—6—23.

Совет государствин организацилӗхӗпе хӑвачӗ

ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ ӗнер хайӗн ӗҫне туса пӗтерчӗ. Халӑх суйласа лартнӑ ҫынсем ӗҫлекен Кремљри Пысӑк дворец ҫине пӗтӗм ҫӗршыв вуникӗ кун хушши тимлӗн пӑхса тӑчӗ.

ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ чылай ыйтусем татса пачӗ, вӑл ыйтусем государствӑшӑн, пирӗн пӗтӗм халӑхшӑн калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫессӣ ССР Сойузӗн пӗтӗм государствӑ бӳджетне—пирӗн тӑван ҫӗршыв чечекленни ҫинчен; халӑх пурнӑҫӗ лайӑхланса пыни ҫинчен уҫҫӑн ӗнентерсе паракан бюджета—пӗрсаслӑн ҫирӗплетрӗ. Ҫав бӳджетӑн чи пысӑк пайӗ—47,2 мӗлйард тенкӗ—халӑх хуҫалӑхне укҫа-тенкӗ парса тӑнӑ ҫӗре кайат̆. 27 мӗлйард тенкӗ Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗпе Тинӗс-Ҫар Флот Халӑх Комиссариачӗн сметисем тӑрӑх расхутланат̆. Тӑван ҫӗршыва хӳтлессине совет халӑхӗ хӑйӗн таса тивӗҫӗ вырӑнне хурса шутлат̆!

Рабочисемпе хресченсен социализмла государствин бӳджетӗнче социаллӑ-куљтурӑлла ӗҫсем ваљљи паракан расхутсене хисеплӗ вырӑн уйӑрса панӑ.

Халӑх суйласа лартнӑ ҫынсем, пӗтӗм совет халӑхӗн ирӗк-кӑмӑлне палӑртса, ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Ҫессинче сӳтсе-йавма паратнӑ бӳджет пройектне хӗрӳллӗн хапӑл турӗҫ. Бӳджет дисциплинине ҫирӗппӗн пӑхӑнса пыма кирлине, халӑхӑн кашни пӗр пус укҫине хуҫалӑхла упрама кирлине кӑтартса, Верховнӑй Совет депутачӗсем бӳджетӑн мӗн пур статйисене тӗплӗн сӳтсе-йаврӗҫ.

Верховнӑй Совет депутачӗсем ССР Сойузӗн, сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен судоустройствӑ Положенийӗ" пройектне сӳтсе-йавасси идейӑпа политикӑлла пысӑк ҫӳлӗшре иртрӗ. Халӑх ырлӑхӗшӗн хыпса ҫунакан депутатсем судоустройствӑ саккунне пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса ҫирӗплетрӗҫ, ку саккун аслӑ Сталинла Конституци шухӑшӗпе тулса тӑрат̆, вӑл саккун суд авторитетне тата унӑн воспитани паракан рољне пысӑк ҫӳлӗше ҫӗклет. Совет судӗ умӗнче—хӑйӗнче социализмлӑ демократин принципӗсене пурнӑҫа кӗртсе тӑракан суд умӗнче—халӑха тата социализмлӑ государствӑна ырлӑх кӳрес тӗлӗшпе усӑллӑ, тухӑҫлӑ ӗҫлеме калама ҫук анлӑ талкӑшсем уҫӑлса выртаҫҫӗ. Суд ӗҫне, ҫавӑн пекех пӗтӗм государствӑ управленине те, мӗн пур граждӑнсене хутшӑнтарасси ҫинчен Ленин панӑ аслӑ хушу Верховнӑй Совет йышӑннӑ судоустройствӑ саккунӗнче йар уҫҫӑн палӑрса тӑрат̆. Конституципе пӗтӗмӗшпех килӗшӳллӗн пулса депутатсем кунта Ҫессинчех ССР Сойузӗн Верховнӑй Судне суйларӗҫ, кандидатурӑсенчен кашни ҫинчен тӗплӗн те шухӑшласа сӳтсе-йаврӗҫ.

ССРС Верховнӑй Совет депутачӗсем „ССРС граждӑнстви ҫинчен" калакан саккун пройектне пысӑк ҫӗклевӳпе, хумханулӑн та хӗрӳллӗн сӳтсе-йавса ҫирӗплетрӗҫ. Пройекта сӳтсе-йавнӑ чухне депутатсем каланӑ сӑмахсем ҫулӑмлӑ патриотизмпа, хӑйсен тӑван ҫӗршывӗшӗн саккунлӑ мухтаннипе тулса тӑчӗҫ, ҫавӑн пек тӑван ҫӗршывӑн граждӑнинӗ пулни—пысӑк чыс, пысӑк телей.

Ҫессӣ „ССР Сойузӗн пӗтӗм тӗнчери догӑвӑрӗсене ратификацилес тата денонсацилес йӗрке саккунне" пӗр сасӑпа ҫирӗплетрӗ. Халӑх суйласа лартнӑ ҫынсем пирӗн ҫӗршыв тунӑ догӑвӑрсене никам та пӑсма пултарайманнине ҫӗнӗрен палӑртрӗҫ. Епӗр—мирлӗ, пуйан, чечекленекен, вӑйлӑ державӑ, вӑл державӑн сӑмахӗ ҫирӗп те вичкӗн. ССР Сойузӗн пӗтӗм тӗнчери политикин никӗсӗ — миршӗн кӗрешни тата хӑйӗн пӗтӗм тӗнчери обйазательствисене пӑхӑнса пыни пулса тӑрат̆.

ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ „Уйрӑм хуҫалӑхсен лашисем ҫине государствӑ налогӗ хумали саккуна" сӳтсе-йавса, ӑна пӗр сасӑпах ҫирӗплетрӗ. Ҫак саккун совет йалӗн пурнӑҫӗшӗн питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Вӑл саккун государствӑ обйазательствисене тултарас ӗҫре уйрӑм хуҫалӑхсем хушшинче дисциплинӑна тӗреклетме пулӑшат̆, мӗн пур тӳрӗ кӑмӑллӑ йединоличниксене малала та колхозсене кӗме пулӑшат̆, спекуљантла елементсен ӗҫне чарса лартат̆, колхозсене малала та организаципе хуҫалӑх йенчен тӗрекленсе пыма пулӑшат̆. Ҫавӑн пекех Пӗтӗм Сойузри йалхуҫалӑх выставкипе ҫыхӑнса тӑракан ыйтусем ҫине те Ҫессӣ пысӑккӑн ҫаврӑнса пӑхрӗ.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗ Пӗрремӗшпе Иккӗмӗш Ҫессисем хушшинчи тапхӑрта йышӑннӑ Указсене ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн, Ҫессӣ ӗҫӗ пӗтрӗ. Хӑйсем патӗнче, вырӑнсенче, Верховнӑй Совет йышӑннӑ саккунсене пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшас тесе, вӑл саккунсем мӗнле пысӑк та кирлӗ вырӑн йышӑнса тӑнине халӑха ӑнлантарса парас тесе, депутатсем килӗсене саланаҫҫӗ.

ССРС Верховнӑй Совечӗн Иккӗмӗш Ҫессийӗ бољшевикла организацилӗхпе ӗҫлӗхӗн примерне пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартса пачӗ. Буржуалӑ парламентсенчи пек пуш параппан ҫапмасӑр тата усӑсӑр павраммасӑр, халӑх суйласа лартнӑ ҫынсем государствӑ пурнӑҫӗнчи пысӑк ыйтусене лӑпкӑн та организацилӗн татса пачӗҫ. Саккун пройекчӗсене сӳтсе-йавса йышӑннӑ чухне ССРС Верховнӑй Совет депутачӗсем пурте пӗр кӑмӑллӑ пулни—совет халӑхӗ пӗр кӑмӑллӑ пулнине йар уҫҫӑн палӑртса тӑрат̆, вӑл совет халӑхӗ Ленин—Сталин партийӗ тата совет правительстви тавра пӗрлешнӗ, коммунизмӑн ҫӳлӗ идеалӗсемпе хавхаланнӑ, хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗсене рабочисемпе хресченсен социализмлӑ государстви малашне те ҫӗнтерсе пырассишӗн кӗрешнӗ ҫӗре парат̆.

ССРС Верховнӑй Совет депутачӗсем Сталин йулташа—совет халӑхӗн ашшӗпе тусне—калама ҫук пысӑк хастарлӑхпа саламларӗҫ. Ҫессӣн йулашки ларӑвӗ—ҫӗнтерӳлӗ социализмӑн аслӑ Конституцине туса паракана чысласа тӑвӑллӑн оваци тунипе вӗҫленчӗ, вӑл оваци совет ҫӗршывӗнчи мӗн пур ӗҫҫыннисем Сталин йулташа ҫулӑмлӑн йуратнине палӑртса парат̆.

Сталин йулташ Советсен Пӗтӗм Сойузри Чрезвычайлӑ VIII-мӗш Съесӗнче ССР Сойузӗн Конституци пройекчӗ ҫинчен тунӑ докладра ҫапла каланӑ:

„... ССР Сойузӗнче унашкал классем,—капиталиссем, помещиксем, кулаксем тата урӑх ҫавӑн пек классем текех ҫук ӗнтӗ. ССР Сойузӗнче икӗ клас анчах, вӗсен интересӗсем тӑшманла теме мар, йӑлтах урӑхла—туслӑ".

Рабочисемпе хресченсен туслӑхӗ, вӗсен интересӗсем пӗрпек пулни совет халӑхӗ пӗр кӑмӑллӑ пулнин никӗсӗнче выртаҫҫӗ. ССР Сойузӗнчи пролетариат пӗтӗмпех ҫӗнӗ клас, ССР Сойузӗн рабочи класӗ пулса тӑчӗ, вӑл хуҫалӑхӑн капитализмлӑ ҫиҫтемине пӗтерсе, производствӑ орудийӗсемпе хатӗрӗсене социализмлӑ харпӑрлӑх туса ҫирӗплетсе, совет обществине коммунизм ҫулӗпе илсе пыракан рабочи клас пулса тӑчӗ. Пирӗн совет хресченӗсем хӑйсен чи нумай пайӗпе колхоз хресченӗсем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем хӑватлӑ социализмлӑ йалхуҫалӑх техникин никӗсӗ ҫинче коллективлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Пӗтӗм тымарӗсемпе рабочи класпа тата хресченсемпе ҫыхӑннӑ пирӗн совет интеллигенцийӗ халӑхшӑн ӗҫлет, рабочисемпе тата хресченсемпе алла-аллӑн тытӑнса коммунизм обществине тӑвас ӗҫре ӗҫлет.

Пӗтӗм совет халӑхӗ Ленин—Сталин партийӗпе совет правительстви тавра пӗр уйрӑлми пӗтӗҫни пирӗн государствӑна пысӑк хӑват парат̆, вӑл хӑват мӗн пур тӑшмансене ирпа-кӗрпе пек ҫапса иркатма пултарат̆.

ССРС Верховнӑй Совет ӗҫӗ пирӗн тӑван ҫӗршыва малала тӗреклетсе пыма пулӑшат̆, вӑл ӗҫе пӗтӗм аслӑ совет халӑхӗ чи хӗрӳллӗн ырлат̆.

(„Правда" умстатйин, августӑн 22-мӗш).

Австри министрӗсем пулнӑ ҫынсене суда параҫҫӗ

Ҫак кунсенче Германи правительстви Австри правительствин членӗсем пулнӑ ҫынсене хирӗҫ суд туса иртерме йышӑннӑ. Австририйӗ килнӗ сведенисем тӑрӑх, сентйабӗн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче Венӑра Австри канцлерӗ пулнӑ Шушнигга тата министр пулнӑ ҫынсене „Германи нацине хирӗҫ тӑшманла ӗҫсем тунӑшӑн" тесе айӑпласа суд тӑваҫҫӗ.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВАРҪӐ

Центрти Китайра Йапонин 20 ҫар карапӗ Цзӳцзйанран кӑнтӑр йенчи Синцзы хули ҫине артиллерирен персе тӑнӑ. Цзӳцзйанран хӗвеланӑҫ йеннерех, Йанцзы йуханшывӗ тӑрӑх, Китай ҫарӗсем ӑнӑҫлӑ контрнаступлени пуҫланӑ. Хаљхи вӑхӑтра Китай ҫарӗсем Ваҥфушаҥ ҫине атакӑ тӑваҫҫӗ.

Августӑн 22-мӗшӗнче Шанхай таврашӗнче пысӑк ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ. Ҫапӑҫӑва Йапони салтакӗсем пин ҫын ытла хутшӑннӑ. Пӑшалсенчен пенӗ сасӑ хулара лайӑхах илтӗнет. Шанхай урамӗсем тӑрӑх Йапонин пулӑшма кайакан ҫарӗсем васкавлӑн куҫса ҫӳреҫҫӗ.

Августӑн 20 мӗшӗнче Ҫурҫӗр Китайра Пучжоуран кӑнтӑр йенчи районра йапонецсем Китай чаҫӗсене хирӗҫ наступлени пуҫланӑ, вӗсен тӗллевӗ—Хуанхе йуханшывӗ урлӑ каҫасси. Тӗтӗм чаршавӗпе тата 20 ытла бронемашинӑпа хӳтленсе, Йапони ҫарӗсем Китай ҫарӗсене хирӗҫ атакӑ тунӑ. Ҫапӑҫу пуҫланнӑ хыҫҫӑн часах алвӗҫҫӗн ҫапӑҫма пуҫланӑ. Ҫапла ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн йапонецсем кайала чакнӑ, вӗсен вилсе тата аманса 300 ҫын пӗтнӗ.

Сиаҥрен (Шанси провинци) пӗлтернӗ тӑрӑх, Манчжоу-Го ҫарӗнчи 600 салтак Китай ҫарӗ йенне куҫнӑ. Ҫав салтаксем хӑйсем пӗтӗмӗшпех Китай правительстви майлӑ пулни ҫинчен пӗлтернӗ.

(ТАСС).

Италири йунлӑ тытӑҫусем

Корато хулинче (кӑнтӑр Италире) фашисла жандармсем, фашиссен выҫлӑхпа вӑрҫӑ режимне хирӗҫ демонстрацине тухнӑ ҫынсен ушкӑнӗ ҫине пӑшалсенчен пенӗ.

Парижран пӗлтернӗ тӑрӑх, вӑл демонстрацисем умӗн урӑх событисем нумай пулса иртнӗ. Ӗҫ ҫакӑнтан пуҫланнӑ: Чиалделла батракӑн ҫемйи, Чиалделла ывӑлӗсенчен пӗрне фашизмшӑн тата Франко генералшӑн ҫапӑҫма Испанийе йани ҫинчен пӗлтерӳ илнӗ пулнӑ. Вӑл ҫемйен пӗр ывӑлӗ унччен Абиҫсинире вилнӗ пулнӑ. Амӑшӗ, ҫӗнӗ хурлӑхлӑ хыпар ҫинчен пӗлсен, макӑрма пуҫланӑ. Вӗсен пӳрчӗ йӗри-тавра нумай кӳршӗсем пуханнӑ, вӗсем телейсӗр ҫемйепе пӗрле хурланнӑ, вӑрҫӑпа выҫлӑх режимне хирӗҫ уҫҫӑнах калаҫнӑ.

Унтан пӗтӗм квартал нихӑҫан пулман пек хумханса кайнӑ, влаҫсем жандармсене чӗнсе илнӗ. Жандармсем 20 ҫынна, вӑл шутрах Серафинӑ Каљдаранана арестленӗ, Серафинӑ пилӗк ача амӑшӗ пулнӑ. Ҫапла арестлени пӗтӗм халаха тата ытларах тарӑхтарнӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн виҫӗ кунтан ҫакӑр хакне ӳстерни ҫинчен калакан официаллӑ пӗлтерӳ пырса ҫитнӗ. Вара ҫӗршер хӗрарӑмсем ачисене йӑтса урамсене тухнӑ, вӗсем Италийе чухӑнлӑхпа вӑрҫа кӗртсе ӳкерне фашизма хирӗҫ протест тунӑ.

Плошчӗте 1.500 ҫын ытла пуханнӑ. Жандармери тата фашисла отрйадсем пӑшалсенчен пеме пуҫланӑ. Нумай хӗрарама амантнӑ, ҫавӑн пекех 12 ҫулхи хӗрачана пуҫран йӑвар амантнӑ.

Демонстрантсем чышкӑсемпе ҫапӑҫса, чулсемпе, алла мӗн лекнӗ ҫавӑнпа пере-пере, хайӑрран хирӗҫ тӑнӑ. Икӗ жандарма вӗлернӗ.

(ТАСС).

Германире рабочисене пӗр шеллемесӗр експлоатацилеҫҫӗ

Фашисла Германин тӗрлӗ пункчӗсенчен — ҫар промышлӗннӑҫӗн пур отрӑҫлисенче те ӗҫсем сарӑлса, ӗҫ хӑвӑртлӑхӗ ӳссе пыни ҫинчен, рабочисене експлоатацилесси вӑйланса пыни ҫинчен калакан сведенисем килеҫҫӗ. Вӑрҫӑ ваљљи кирлӗ йапаласем тӑвакан пур савӑтсенче те официаллӑ йӗркепех ернере 60-шар сехет ӗҫлемеле туса хунӑ. Ҫар предприйатийӗсенчи рабочисене отпусксем памаҫҫӗ. Хӗрарӑмсен ӗҫӗпе усӑ курасси ӳсе пырат̆, анчах хӗрарӑмсене ӗҫукҫи калама ҫук сахал тӳлеҫҫӗ.

Гестапо (Германири вӑрттӑн полици) шпионла сӑнаса йӗрлесе тӑрасси вӑйланса пырат̆. Ҫар предприйатийӗсенче гестапо агенчӗсен шутне 3—4 хут ӳстернӗ. Ҫар обйекчӗсем тунӑ ҫӗрте кашни рабочи хӑйне мӗнле тыткалани ҫинчен картӑчкӑсем ҫине ҫырса пыраҫҫӗ.

Хайар террор сарӑлса кайнӑ пулсан та, ҫар промышлӗннӑҫӗнче рабочисем фашисла ӗҫсене хирӗҫ кӗрешесси сарӑлса пырат̆. Берлин районӗнчи пӗр пысӑк ҫар предприйатинче ҫӗнӗ цех тунӑ ҫӗрте рабочисем ӗҫукҫине ӳстерме ыйтнӑ. Администраци вӗсем ыйтнипе килӗшмен, вара рабочисен пӗр ушкӑнӗ, епӗр саватран кайатпӑр, тесе пӗлтернӗ. Администраци ҫакӑн ҫинчен гестапона пӗлтернӗ, гестапо вара ҫак выступлени организаторӗсене арестленӗ. Ҫак кунсенче ҫав арестленӗ рабочисенчен пӗрне, „ӗҫе тухманшӑн", тесе айӑпласа, икӗ ҫул ҫурӑ тӗрмере хупса усрамалла тунӑ.

(ТАСС)

Франко генералӑн намӑссӑр отвечӗ

Лондонран пӗлтернӗ тӑрӑх, Испани ӗҫӗсене хутшӑнас мар тӗлӗшпе ӗҫлекен пӗтӗм тӗнчери комитет йулӗн 8-мӗшӗнче йанӑ нотӑна ответлесе, Франко генерал ҫапла пӗлтернӗ: „добровольсене" чӗнсе илессипе вӑл „принцип тӗлӗшӗнчен килӗшет", анчах ҫарсене пропорцилӗ шутпа илсе кайассине хирӗҫ тӑрат̆, унтан вӑл икӗ йенчен те 10-шар пин ҫын чӗнсе илме сӗнет, анчах ҫакӑншӑн ӑна, Франкона, кӗрешекен йенӗн прависене памала. Малала тата Франко генерал хӑйне кӗрешекен йенӗн прависене пама Англи планӗ палӑртнӑ условисемпе „килӗшмест". Ҫав правасене Франко хӑйне пӗр нимӗнле условисӗр пама ыйтат̆.

(ТАСС).

Ҫӗнӗ займ облигацисене алла илчӗҫ

Чурачӑкри (Ҫӗрпӳ районӗ) пуљницӑра ӗҫлекен медработниксем Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑхӑн (пӗррремӗш ҫулхи кӑларӑм) Займне пурӗ 14 ҫын 1900 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Халӗ 1900 тенкӗ укҫан тӳлесе татса ҫӗнӗ займ облигацийӗсене алла илчӗҫ.

К Михайлӑв.

Финанс активӗ

Массӑпа мӗн чухлӗ лайӑхрах ӗҫлетӗн, ӗҫ ҫавӑн чухлӗ ӑнӑҫлӑрах пулса пырат̆. Епӗр ҫакна лайӑх ӑнланса илтӗмӗр. Пирӗн Тӑрӑм йалсовечӗ (Йелчӗк районӗ) йулашки вӑхӑтра массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе ҫӳлӗ вырӑна лартрӗ. Йалсовет РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ вӑхӑтӗнче ӳссе ҫитӗннӗ активпа хӑй тавра ҫавӑрчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн епӗр ӗҫре пысӑк улшӑнусем турӑмӑр. Финанс секци каличчен начар ӗҫленӗ. Секци руководителӗ Ваҫлей Лаптӗв йулташ хӑй тавра актив пухнӑ хыҫҫӑн, хӑйӗн умне укҫа-тенкӗ пухас ӗҫпе районра чи малти рете тухас тесе задачӑ лартрӗ. Кунпа финанс активӗ килӗшрӗ. Финанс секци членӗсем пӗр-пӗрипе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Ӑмӑртса ӗҫлесе йалсовечӗ августӑн 15-мӗшнӗ 3-мӗш квартӑлти укҫа-тенкӗ пухас плана 75 процент тултарчӗ. Вӑл шутран займ укҫине 76 процент, 1938 ҫулхи йалхуҫалӑх налог укҫине 30 процент, страховкӑ укҫине 50 процент тултарчӗ.

„Вперед" колхоз членӗсем Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займ укҫине 100 процентӗнех тӳлесе татрӗҫ. Чи малтан йалхуҫалӑх налогӗ, страховкӑ, займ укҫисене А. Калсанӑв, Т. Васҫилйӗв, А. Крылов, Д. Кириллӑв, В. Лаптӗв, К. Ҫеменӑв, С. Петров колхозниксем тӳлесе татрӗҫ.

Халӗ епӗр массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫсене кулленех вӑйлатса пырса, йалсовета укҫа-тенкӗ пухас ӗҫпе малта кӑларассишӗн кӗрешетпӗр.

Тӑрӑм йалсовет председателӗ А. Баймушкин.

Колхозсенчи таварлӑ сӗт-ҫу фермисенчи ӗҫе организацилессипе ӗҫшӗн тӳлес йӗрке

ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ „Колхозсенчи таварлӑ сӗт-ҫу фермисенчи ӗҫе организацилессипе ӗҫшӗн тӳлес йӗрке" ҫинчен инструкци ҫирӗплетнӗ. Ҫав инструкци тӑрӑх, колхоз правленийӗ колхоз членӗсенчен сӗт-ҫу ферминче ӗҫлеме виҫӗ ҫулран кайа мар вӑхӑта йалавлӑх бригадӑ организацилет. Ҫав бригадӑна колхоз правлени выљӑхсене, вӗсене пӑхма кирлӗ ӗҫ хатӗрӗсене, кӳлсе ҫӳремели таврашсене тата ӗне выљӑхсене усрамалли ҫурт-йӗрсене ҫирӗплетсе парат̆.

Пысӑк фермӑсенче темиҫе бригадӑ та пулат̆. Кашни бригадӑ 50—60 ӗне (пӑрусемпе пӗрле) пӑхат̆. Ҫавнашкалах пысӑк фермӑсенче 6—7 уйӑхран иртнӗ ҫамрӑк выљӑхсене пӑхма уйрӑм бригадӑ пулма пултарат̆.

Бригадирпа фермӑ пуҫлӑхне колхоз правленийӗ икӗ ҫуллӑхран кайа мар вӑхӑта уйӑрса лартат̆. Сӗт-ҫу ферминче пӗр бригадӑ ҫеҫ ӗҫлет пулсан, ун пек фермӑсенче бригадир — вӑлах фермӑ пуҫлӑхӗ пулса тӑрат̆.

Фермӑра ӗҫлекен бригадӑри колхозниксем хушшинче ӗҫе бригадир хӑйӗх, йалхуҫалӑх ертел уставӗн 14-мӗш пунктинче хушнӑ пек, валеҫсе парат̆. Колхоз правленийӗ фермӑра ӗҫлекен бригадӑ ваљљи ҫулталӑк хушши ӗҫлесе тӑмашкӑн производствӑлӑ задани туса парат̆.

Колхозсенчи таварлӑ сӗт-ҫу фермисенче ӗҫлекен колхозниксен ӗҫне сдељщинӑ тӑрӑх организацилеҫҫӗ, продукцин хисепӗпе унӑн пахалӑхне кура ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ. Йалхуҫалӑх ертел уставӗ тӑрӑх, колхоз правленийӗ ӗне ферминче ӗҫлекен колхозниксен ӗҫ нормине тата миҫе ӗҫкунӗ памалине шутласа хатӗрлет, ӑна колхозниксен аслӑ пухӑвӗ пӑхса тухса ҫирӗплетет. Ӗҫ норми тӑрӑшса ӗҫлекен колхозник тума пултармӑ нормӑ чухлӗ пулмала. Нормӑсене тунӑ чухне выљӑхсен пахалӑхне, фермӑна механизацилениие тата оборудованийе шута илни кирлӗ.

Колхоз правленисен ҫакӑнта кӑтартнӑ примерлӑ нормӑсем тӑрӑх ӗҫлесе пырас пулат̆. Ӗне сӑвакан-скотницӑ ҫумне 3 ҫуллӑхран кайа мар вӑхӑта ӗнесемпе пушмак пӑрусене 8 пуҫран пуҫласа 14 пуҫа ҫитиччен уйӑрса параҫҫӗ (нумай сӗт паракан ӗнесене сахалтарах, сахал параканнисене чылайрах уйӑрса памала).

Пушмак пӑрусене пӑрулаччен 4 уйӑх малтан ӗне сӑвакан-скотницӑ аллине параҫҫӗ. Ӗне сӑвакан скотницӑсене ӗҫлеме лайӑх услови туса парас шутпа, ӗнесем тӑмалли вырӑнсене тасатас, тислӗк туртарас, шӑтӑксенчен тата башњӑсенчен силос кӑларас, шыв турттарас ӗҫсене тума скотника хушаҫҫӗ.

Ӗнесене пӑруламали йатарласа тунӑ ҫуртсем тата профилактори пур фермӑсенче ӗнесем пӑруланӑ хыҫҫӑнах, пӑрусене ҫитӗнтерме пӑру пӑхакансен аллине параҫҫӗ. Профилактори ҫук тата тељатник фермӑ ҫывӑхӗнчех пулсан пӑруланӑ хыҫҫӑн пӑрусене 15—20 кунччен ҫитӗнтерме ӗне сӑвакан скотницӑ аллине параҫҫӗ.

Пӑрусене амӑшне ӗмӗртсе ҫитӗнтерекен фермӑсенче ӗне сӑвакан-скотницӑ пӑрусене амӑшӗсен сӗтне пӑрахтариччен пӑхат̆.

Пӑрусене ал вӗҫҫӗн сӗт ӗҫтерекен фермӑсенче сӗт сӑвакан-скотницӑна ҫапла майпа шутласа ӗҫкунӗ параҫҫӗ: унӑн ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен кашни 100 литр сӗт суса илнӗшӗн 1,7—1,8 ӗҫкунӗ; ӗнене пӑрулаттарма хатӗрленӗшӗн тата унтан сывӑ пӑру илнӗшӗн — 5 ӗҫкунӗ. Сӗт сӑвакан-скотницӑ пӑрусене 15—20 кунччен пӑхат̆ пулсан, ӗнене пӑрулаттарма хатӗрленӗшӗн тата унтан сывӑ пӑру илсе, ӑна 15—20 кунччен пӑхса ҫитӗнтернӗшӗн 8 ӗҫкунӗ; пушмак пӑрусене пӑрулаттарма хатӗрленӗшӗн тата унтан сывӑ пӑру илнӗшӗн 7 ӗҫкунӗ. Сӗт сӑвакан скотницӑ пӑрусене 15—20 кунччен пӑхат̆ пулсан, пушмак пӑрува пӑрулаттарма хатӗрленӗшӗн, пӑру илнӗшӗн тата ӑна 15—20 кун хушши пӑхнӑшӑн 10 ӗҫкунӗ; кашни ӗнене вӑкӑрпа чуптарнӑшӑн—1 ӗҫкунӗ; кунсӑр пуҫне ӗне пӗтӗ пулса йулни палӑрсан хушса тепӗр ӗҫкунӗ; вӑл пӑхакан ӗнесем хушшинче хӗсӗр йулнӑ ӗнесем пулмасан (ҫулталӑк хушшинче кашни ӗнерен сывӑ пӑру илни) 10 ӗҫкунӗ.

Пӑрусене ал вӗҫҫӗн сӗт ӗҫтерсе ҫитӗнтерекен фермӑсенче сӗт сӑвакан-скотницӑна ҫапла майпа ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ: хӑй ҫумне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен суса илнӗ кашни 100 литр сӗтшӗн 1,7—1,8 ӗҫкунӗ; кашни ӗнене чуптарса хӑварнӑшӑн — 1 ӗҫкунӗ; кунсӑр пуҫне тата ӗне пӗтӗ пулса йулни палӑрсан хушса тепӗр ӗҫкунӗ, вӑл пӑхакан ӗнесем хушшинче хӗсӗр йулнӑ ӗнесем пулмасан (ҫулталӑк хушшинче кашни ӗнерен сывӑ пӑру илни) 10 ӗҫкунӗ; ӗнене йе пушмак пӑрува пӑрулаттарма хатӗрленӗшӗн тата кашни пӑрува амӑш сӗтне ӗмме пӑрахтариччен пӑхнӑшӑн, пӑру мӑнтӑрлӑхне пӑхмасӑр, — 12 ӗҫкунӗнчен пуҫласа 15 ӗҫкунӗ таран.

Скотник-кӗтӳҫе ҫак йӗркепе ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ: (унӑн ҫумне 30 ӗнерен пуҫласа 50 ӗнене ҫитиччен ҫирӗплетсе параҫҫӗ) вӑл пӑхакан ӗнесенчен суса илнӗ кашни 100 литр сӗтшӗн 0,5—0,6 ӗҫкунӗ таран; унӑн ушкӑнӗнчи ӑнӑҫлӑн пӑруланӑ кашни ӗнешӗн 1 ӗҫкунӗ; кашни ӗнене вӑкӑрпа чуптарса хӑварнӑшӑн (пӗтӗ йулни палӑрсан) 1 ӗҫкунӗ; унӑн ушкӑнӗнчи ӗнесем хушшинче хӗсӗр йулни пулмаҫшӑн 20 ӗҫкунӗ; ӗнесемпе пӗрле темиҫе пуҫ ҫамрӑк пӑрусене пӑхат̆ пулсан, вара ҫамрӑк пӑрусене пӑхакан скотник-кӗтӳҫе тӳлекен расценкӑпа хушса ӗҫкунӗ параҫҫӗ.

Сӗт-ҫу ферминче вӑкӑрсем 3 ытла мар пулсан вӗсене бригадир йе скотник-кӗтӳҫ пӑхат̆ (тӑрантарат̆, шӑварат̆, тасатат̆, уҫӑлтарса ҫӳретет, ӗнесене чуптарат̆). Фермӑра 3 вӑкӑр ытларах пулсан, вара вӗсене пӑхма уйрӑм ҫын уйӑраҫҫӗ. Вӑкӑрсене пӑхакан бригадира йе скотнике кашни ӗнене ал вӗҫҫӗн чуптарнӑшӑн (пӗтӗ пулса йулнине палӑртнӑ хыҫҫӑн) 1,5 ӗҫкунӗ; кашни вӑкӑра тӑрантарнӑшӑн, шӑварнӑшӑн, тасатнӑшӑн, уҫӑлтарса ҫӳретнӗшӗн — уйӑхра 4 ӗҫкунӗ параҫҫӗ.

Пӑрусене пӑхаканӗ пӑрусене сӗт сӑвакан-скотницӑран илнӗ хыҫҫӑн 6 уйӑха ҫитиччен пӑхат̆. Унӑн 20—25 пӑру пӑхмала. Пӑрусем 6 уйӑх тултарса пынӑ май, вӑл вӗсене скотник-кӗтӳҫе парса пырат̆, ҫӗнӗрен ҫуралнисене илнисемпе хӑйӗн нормине тултарат̆. Пӑрусем сахал пулсан, пӑрусене пӑхакан вӗсене ҫулталӑка ҫитиччен пӑхат̆.

Пӑрусене пӑхаканӑн 20—25 пӑру пулсан, вӗсене сӗт ӗҫтерсе ҫитӗнтерне вӑхӑтра пулӑшма колхоз правленийӗ тепӗр ҫын уйӑрса пама пултарат̆. Пӑрусене пӑхакана пулӑшма уйӑрнӑ ҫынӑн тислӗке тасатмала, пӑрусем тӑракан клеткӑсене тасатмала тата вӗсене шуратмала, пӑрусен вити урайне ҫумала, пӑрусем айне сармаллине хатӗрлемеле, шыв ӑшӑтмала тата ытти ӗҫсене те тумала.

Пӑрусене пӑхса ҫитӗнтерекен—унӑн ҫумне ҫирӗплетсе панӑ пӑрусем чӗрӗ виҫепе хутшӑннӑ кашни 10 килограмшӑн 0,8 ӗҫкунӗ; кашни пӑрува ҫуралнӑран пуҫласа 6 уйӑхчен пӑхса ҫитӗнтернӗшӗн 9 ӗҫкунӗ; кашни пӑрува ҫуралнӑ хыҫҫӑн 15—20 кунтан пуҫласа 6 уйӑхчен пӑхнӑшӑн 6 ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ.

Пӑрусене виҫессине организацилемен фермӑсенче пӑру пӑхакана ҫапла майпа ӗҫкунӗ параҫҫӗ: кашни пӑрува ҫуралнӑран пуҫласа 6 уйӑхчен пӑхнӑшӑн 9 ӗҫкунӗ; кашни пӑрува ҫуралнӑ хыҫҫӑн 15—20 кун иртнӗ хыҫҫӑн 6 уйӑхчен пӑхнӑшӑн 6 ӗҫкунӗ.

Скотник-кӗтӳҫ 30 пуҫран пуҫласа 50 пуҫа ҫитиччен, пӑрусене пӑхаканран илнӗ вӑхӑтран пуҫласа пушмак пӑру пулаччен йе тӑрантарса самӑртмала тӑваччен пӑхат̆. Скотник-кӗтӳҫе пӑрусене пӑхнӑшӑн ҫак йӗркепе ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ: унӑн ҫумне ҫирӗплетнӗ пӑрусем чӗрӗ виҫепе хутшӑннӑ кашни 10 килограмшӑн 0,9 ӗҫкунӗ; кашни чупма вӑхӑт ҫитнӗ пӑрува чуптарнӑшӑн (пӗтӗ йулнине палӑртнӑ хыҫҫӑн) 1,5 ӗҫкунӗ.

Ҫамрӑк пӑрусене виҫессине организацилемен фермӑсенче скотник-кӗтӳҫе ҫапла майпа ӗҫкунӗ шутласа параҫҫӗ: кашни ҫамрӑк пӑхса ӳстернӗшӗн кашни уйӑхра 0,6—0,8 ӗҫкунӗ; чупма вӑхӑт ҫитнӗ пӑрусене—кашнине вӑхӑтра чуптарса хӑварнӑшӑн (пӗтӗ йулнине палӑртнӑ хыҫҫӑн) 1,5 ӗҫкунӗ.

Выљӑхсене тӑрантарса самӑртнӑ чухне ӗҫлекен работниксене чӗрӗ виҫепе хутшӑннӑ кашни 10

(Йулашши 2-мӗш страницӑра).

Трахом стадийĕсем

Трахом—темиçе çул хушши пыракан куç чирĕ. Çав темиçе çул хушшинче трахом пирки куç хупаххин шал йенĕ тĕрлĕрен улшăнса пырать. Çапла улшăнса пынă пирки трахома 4 стадийе уйăрнă.

Пĕрремĕш стади пулсан куç хупаххине чи малтанах шатрасем тухаççĕ. Куç хупаххисене тавăрса пăхсан çав шатрасем пулă вĕлчи йеверлĕ курăнаççĕ. Куçа вăхăтра емеллетермесен шатрасем нумайлансах пыраççĕ.

Иккĕмĕш стадинче шатрасем пĕрленсе йухса пĕте пуçлаççĕ. Вĕсен вырăнне çĕвĕсем пулса йулаççĕ. Куç хупаххине тавăрсан трахом шатрисем хушшинче шуралса йулнă çĕвĕсене курма пулать.

Виççĕмĕш стади тапхăрĕнче трахом шатрисем сахаллансах пыраççĕ. Вĕсен вырăнне ытларах çĕвĕсем пулса йулаççĕ. Куç хупаххине тавăрса пăхсан шатрасем сахалланса йулнине тата вĕсем шуралса пынине курма пулать.

Тăваттăмĕш стадинче трахом шатрисем пачах пĕтеççĕ. Вĕсен вырăнне çĕвĕсем пулса йулаççĕ. Трахом пур чухне те çавăн пек стадисене çитеймест. Йеркелĕ емеллесе пырсан пĕрремĕш стадинчех урăх стадисене куçмасăрах пĕтме пултарать. Иккĕмĕш стади те куçа вăхăтра тата йеркелĕ емеллетерсен нимĕн сийен кӳмесĕрех иртет.

Виççĕмĕш стади пулсан чирлĕ çынна нумай вăхăт хушши тата тĕрлĕрен майпа емеллесе пыма ла. Емеллемесен куç хупаххисем шал йенеле çаврăнса, куç шăрçине ватса пыма, йулашкинчен, куçа шурă илме пултарать. Куçа тĕк тухнине ниепле емелпе те сыватма çук, ăна пульницăра операци туса кăна тӳрлетеççĕ.

Трахомран сывалма куçа йеркелĕ емеллетерсе пымала, унсăрăн трахом чирĕ çынна суккăр тума пултарать.

Врач Е. Макарăв.

Культурăлă таварсене кӳрсе килмеççĕ

Лапракасси (Йетĕрне р.) йалповĕн Тури Ачакри уйрăмĕ питĕ начар ĕçлет. Прикашчиксем часчасах улшăнса тăраççĕ. Çак çула кĕнĕренпе 4 прикашчик улшăннă. Вĕсене растратă тунăшăн ĕçрен кăларса йанă, анчах та укçине халĕ те шырасах илмен.

Тулли те хавасĕ пурăнăçпа пурăнакан колхозниксем культурăлă таварсем нумай ыйтаççĕ. Анчах çак çула кĕнĕренпе патефон, музыкă инструменчĕсем, радио т. ыт. таварсене те кӳрсе килмерĕç. Тĕрĕ учебниксем, кăрандашсем т. ыт. таварсене те туянса илме çук кунта.

Лавкка прикашчикĕ Васнайĕвă суту-илĕве культурăлă йеркелессишĕн тăрăшмасть. Урайсене çумаççĕ. Çимĕç таварĕсене йеркеле уçрамаççĕ.

П. Ш-в.

Колхозсенчи таварлă сĕт-çу фермисенчи ĕçе организацилессипе ĕçшĕн тӳлес йĕрке

(Й У Л А Ш К И)

[illegible]

Республикăлă Испанире

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă çар бойецĕсен отрйачĕ малти позицисенче.

Сойузфото („Прессклише").

ПРИЗЫВ УМĔН

Депутат доклачĕ

Августăн 18-мĕшĕнче пулнă Йĕпреç районĕнчи допризывниксен канашлăвĕнче тĕнчери лару тăрупа призыва хатĕрленесси çинчен çар капитанĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Бурков йулташ доклад туса пачĕ.

Вăл хăй докладĕнче кăçалхи призыв тĕнчери лару-тăру нихçанхи пек мар çивĕчленсе çитнĕ, вăрçă хăрушлăхĕ ӳссе пынă тапхăрта пулса иртни çинчен, Рабочисемпе Хресченсен паттăр та хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ кирек мĕнле тăшмана та çапса çĕмĕрме пултарни çинчен паллă турĕ.

Доклад хыççăн 1917—18 çулта çуралнă çамрăксенчен чылайĕшĕ пĕлмен ыйтусене ыйтса пĕлчĕç, тухса каларĕç. Ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен хытă тишкĕрчĕç. Допризывниксенчен кăçал 63 çын ГТО, 74 çын ГСО, 28 çын ПВХО тата 96 çын ворошилăвла тĕл перекенсен значок нормисене панă. Пурĕ 22 допризывник трахомран тасалнă. Анчах та ку çителĕксĕр.

Канашлăва пухăннă допризывниксем призыва лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме, оборонăпа физкультурă ĕçне вăйлатма пулса татăклă решени йышăнчĕç.

Канашлура 400 допризывник пулнă.

Вишневский.

Ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕç

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Августăн 18-мĕшĕнче 1917—1918 çулсенче çуралнă допризывниксен районри конференцийĕ пулса иртрĕ. Пулас красноармейĕцсем конференцине купăссемпе, çĕнĕ йурăсем йурласа пуçтарăнчĕç.

Конференцире совет авиацийĕ тата тĕнчери лару тăру ыйтăвĕ çинчен парти райкомĕн çекретарĕ Александрăв йулташ доклад туса пачĕ. Кун хыççăн призыва хатĕрленес ĕç районра мĕнле пыни çинчен тата умра тăракан ĕçсем çинчен туха-туха каларĕç.

Призыва хатĕрленес ĕç районта аван пырать теме çук-ха. Допризывниксем хушшинче трахомрăн сывалса çитменнисем, хутла сахал пĕлекенсем пур. Хутла сахал пĕлекен допризывниксен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе районри организацисем начар ĕçлеççĕ. Допризывниксем хушшинче ГТО, ПВХО тата „Ворошиловский стрелок" значоксен нормисене парас ĕç пачах чарăнса ларнă.

Конференци призыва лайăх хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе Елĕк районĕпе ăмăртса ĕçлеме пулчĕ.

Допризывниксем призыва лайăх хатĕрленме, колхозсенче ударлă ĕçлеме, государствă умĕнчи парăмсене парса татма, вырăнсенче Осоавиахим организацийĕсен ĕçне йĕркелеме пулчĕç.

Йулашкинчен мухтавлă пограничниксен чаплă ĕçĕсем, вĕсен пурнăçĕ çинчен „Граница на замке" кинокартинă кăтартрĕç. Пулас красноармейĕцсем картинăна хавасланса пăхрĕç.

Мих. Иванов.

Канашлу хыççăн

ШĂХАСАН. Августăн 12-мĕшĕнче Варман Йенĕш йалсоветĕнчи 1917—18 çулсенче çуралнă çамрăксен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура йалсовет председателĕ Михайлăв йулташ призыв кунĕпе призыв умĕнхи задачăсем çинчен ăнлантарчĕ. Допризывниксем призыв кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме пулчĕç. И. Çмирнов, Т. Васильĕв, Т. Скворцов, Н. Садовникăв, В. Лазарĕв, Г. Тихăнăв йулташсем йалхуçалăх налогĕ, страховкă, займ укçисене тӳлесе татрĕç. Халĕ призыва хатĕрленнĕ май, вĕсем халăх хушшинче укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнчĕç.

Т. Данилăв.

Курсантсем практикăра

Пайан № чăсĕнчи çар шкулĕнче ытти кунсенхинчен савăнăçларах. Курсантсем пурте çĕнĕ гимнастоккăсем, çĕнĕ атăсем, çĕнĕ пилоткăсем тăхăннă. Праçник чухнехи пек таса çипуçпа тумланнă. Шкултан вĕренсе тухнă май, курсантсем пайан çар чăсĕсене практикăна салаççĕ.

Пĕрле вĕреннĕ курсантсем вечăра пухăнчĕç. Чи малтанах шкул начальникĕ Шувайĕв йулташ стажировкăри задачăсем çинчен каласа пачĕ. Хăй сăмахĕнче вăл курсантсем ăнăçлăн вĕренсе, программăна кăтартулăн пĕтернине палăртрĕ. Уйрăмăнах вăл чăваш ачине, комсомолĕц Й. П. Ишаков йулташа мухтарĕ. Кăтартулă тĕслĕхсемпе вĕренсе пынăшăн, общественлă ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн пуху унăнчен тав турĕ. Чăнах та Ишаков лайăх вĕренчĕ. Çакăншăн ăна шкулăн мухтав хăми çине кĕртнĕ. Ытти курсантсем те ăнăçлă вĕренсе тухнине палăртрĕ Шувайĕв.

Курсантсем стажировкăна тухса кайрĕç, икĕ уйăх хушши стажировкăра пулаççĕ. Ку вăтă халиччен вĕреннине практикăра çирĕплетме май парать.

Курсантсем: П. Улайĕв. И. Олгешов.

Профсойуз комитечĕ тата унăн активĕ

Профсойузсен вăйĕ — массăпа çыхăнса ĕçленинче. Çакна Долгополйанăри хими саватĕнчи нумай пулмасть çĕнĕрен суйланă профсойуз комитечĕ çирĕппĕн тытса парать. Профсойуз комитечĕ пĕтĕм ĕçсене массăпа çыхăнса, членсен масси хушшинчи актив çине тайăнса туса пырать.

Профсойуз комитечĕ çумĕнче тасалăх, тĕрĕслӳ комиççийĕ т. ыт. секцисем ĕçлеççĕ. Вăл секцисене пуринчен ытла производствăра ĕçлекен членсене йавăçтарнă. Çапла туни рабочисен куллехи çивĕч ыйтăвĕсене хăвăртрах тата тĕрĕс татса пама пулăшать. Акă сочувствуйушчи Фофанăв йулташ йертсе пыракан тĕрĕслӳ комиççи мĕнле ĕçленине ил-р. Пĕр вăхăтра савăтри ларйоксенче сутакан çăкăр пахалăхĕ начар пулнă. Тĕрĕслӳ комиççи начар пахалăхлă çăкăра суттармала мар туса убыткине пекарньă çине хунă. Çакăн хыççăн пекарньă лайăхрах çăкăр пĕçерме тытăнчĕ. Тĕрĕслӳ комиççийĕ пекарньăсемпе столовăйсен тата ларйоксен ĕçĕсене йалан тĕрĕслесе пырать.

Йегорăвă йулташ йертсе пыракан тасалăх комиççийĕ хватерсене лайăх тасалăхра тытассишĕн рабочисемпе служăшчисем хушшинче социалисăмлă ăмăрту пуçарнă. Тасалăх тăвас тĕлĕшпе кăтартулă ĕçлекенсене преми пама 300 тенкĕ укçа уйăрнă. Халĕ комиççи хватерсенче т. ыт. çĕрте тасалăх мĕнле тăнине тĕрĕслесе пырать, пулăшу парать.

Профсойуз комитечĕн председателĕ Йакăвлĕв рабочисем хушшинче хаçат-журналсем вуласа парассине организацилерĕ. Рабочисем кашни кунхи хыпарсене пĕлсе пыраççĕ. Кашни уйăхра 7 хутчен кино кăтартаççĕ. Клуб йеркелĕ ĕçлеме пуçларĕ. Унта хаçат-журналсем, патефон, шахмăт, биллиард, домино т. ыт. те пур.

Çаксене пула рабочисен профсойуз ĕçне хутшăнса ĕçлес активлăхĕ ӳссех пырать. Вăл членсен хисепĕ ӳсниччен те лайăх курăнать. Иртнĕ 3 уйăх хушшинче профсойуз членне çĕнĕрен 80 рабочи кĕнĕ. Çĕнĕрен члена кĕнисем пур ĕçе те хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

И. Михайлăв.

Кашни çамрăк ăмăртать

Канашри сĕтел-пукансем тăвакан хапрăкри комсомолĕцсем тата çамрăксем Ленинла Сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле пысăк активлăхпа хатĕрленеççĕ. Комсомолĕцсем: Çергейĕв, Терентйĕв, Йелизарăв, Федăрăв, Соловйов, Суханăвă йулташсем нормăна йалан 150 процент ытла тултарса пыраççĕ. Комсомолкă Суханăвă йулташ полировочнăй цехăн начальникĕ пулса ĕçлет. Унăн цехĕ производствă планне тултарас тĕлĕшпе йулашки вăхăтра чылай ӳсĕмсем турĕ.

Комсомол комитечĕ рабочисемпе çамрăксем хушшинче политикăлă тата культурăлă массăлă ĕçсене вăйлатма май паракан ĕçсене тăвать. Халĕхи вăхăтра савăтра 2 политкружок ĕçлет. Кружоксене коммунист В. Мошков, комсомолĕц Польачихин йулташсем йертсе пыраççĕ.

Комсомолĕцсем тăрăшнипе кашни уйăхрах икшер номĕр стена хаçачĕ тухса тăрать. Хут сахал пĕлекен рабочисене 23 çынна вĕренĕве йавăçтарнă.

Физкультурă кружокĕн ĕçне йĕркеленĕ. Августăн 24 мĕшĕнче „Авангард" промысла ертелĕн физкультурникĕсемпе çăмăл-атлетикă ăмăртăвĕ пулать. Халĕ ăмăртăва хатĕрленесси хĕрӳлĕн пырать. Ку ĕçе комсомолĕцсем Çергейĕвпа Соловйов йулташсем йертсе пыраççĕ.

Кашни комсомолĕц, çамрăк пĕрпĕрнипе ăмăртса ĕçлет.

Ф. Малышкин.

Забойщиксен ĕçĕ

ЙĔПРЕÇ. Буинскри сланцă кăларакан рудникре халĕ електростанцине хута йама тата шахтăсене ĕçе кĕртме хатĕрленес ĕç пырать. Кунта куллен виçĕ çменă ĕçлет. Рабочисем хушшинче стаханăвла тухăçлăхпа ĕçлекенсем те сахал мар. Акă Суханăв йулташ бригади икшер нормă тултарса пырать.

Уйрăмăнах забойщиксем пысăк тухăçлăхпа ĕçленине палăртмала. Забойщик Сорокин йулташ нормăна 280 процент, Марданăв 260 процент, Чугунов 180 процент тултараççĕ. Çапла ĕçленипе вĕсем куллен 25—30 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Вагонеткăсемпе сланцă турттаракансем Радайĕв, Исмайлăнăвă, Йакăвлĕв йулташсем те пысăк тĕслĕхсем параççĕ.

В.

Комсомол XX çул тултарнă йатпа велочупу организациленĕ

ИЕЛЧĔК. Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă йубилейе лайăх кĕтсе илес шутпа, Осоавиахимăн Иелчĕк районĕнчи совечĕ, комсомол райкомĕ тата физкультурă райсовечĕ велочупу организацилерĕç. Командăра 11 комсомолĕц, вĕсем пурте Осоавиахим членĕсем. Велочупу команди район хĕрринчи 24 йалта пулать.

Августăн 18-мĕшĕнче, Авиаци кунĕнче, 13 сехет те 30 минутра Иелчĕкре старт пулчĕ. Чи малтанах командă „Осоавиахим" колхоза пычĕ. Колхозра çар вăййи пулса иртрĕ. Ку колхозра Осоавиахим организаци вăйлă ĕçлет. Колхозниксем пурте çар ĕçне вĕреннĕ, вĕсем сывлăшри тата химилĕ тапăнуран сыхланма пĕлеççĕ. Епĕр пырсан колхозра химилĕ тревогă пулса иртрĕ. Командăри велосипедиссем çвйазиссен вырăнче ĕçлерĕç.

Велочупу команди хăйĕн умне çакăн пек задачăсем лартнă: Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă йубилейе лайăх хатĕрленсе кĕтсе илесси, йубилей йачĕпе тăван çĕршыв-аннене парнесем пама хатĕрленесси, колхозсенче Осоавиахим ĕçне чĕртсе йарасси, физкультурăна вăйлатасси, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси, Хĕрлĕ Çар фончĕ валли уйăрнă лашасене лайăх пăхса усрасси, тырпулсене пухса кĕртесси, кĕракине иртересси т. ыт.

Çак ĕçсене туса иртернĕ чухне епĕр колхозсенчи комсомол тата Осоавиахим пуçламĕш организацисене пулăшу паратпăр, вĕрентсе хăваратпăр.

Велочупу командорĕ

М. Иванов.

Виççĕмĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмали плана тултарас ĕç мĕнле пынине кăтартакан сводкă

(Августăн 21-мĕшне, пин тенкĕпе)

Район йачĕсем	План	Тултарнă	Процент
Улатăр	530,5	166,2	31,3
Елĕк	588,0	144,7	24,6
Патăрйел	678,0	114,6	16,9
Вăрнар	88 ,0	216,0	24,3
Йĕпреç	827,0	145,3	17,5
Ишлей	606,0	11[illegible],5	18,8
Канаш	580,5	115,7	19,9
Куславкка	693,5	13[illegible],8	19,7
Хĕрлĕ Чутай	775,0	168,7	21,7
Кувакинă	399,5	96,9	24,2
Сĕнтĕрвăрри	80[illegible],5	157,2	19,5
Пăрачкав	690,0	153,4	22,2
Турхан	595,0	120,2	20,2
Тутаркас	847,0	232,4	24,5
Трак	45[illegible],0	120,8	26,4
Вăрмар	741,0	144,8	19,5
Çĕрпӳ	711,0	158,0	22,2
Шупашкар	564,5	188,4	33,3
Шăмăршă	422,0	111,7	26,4
Шăхасан	518,0	119,2	23,0
Шăнкăртам	290,5	147,4	50,7
Çĕмĕрле	943,5	236,1	25,0
Йетĕрне	885,0	235,8	26,6
Йелчĕк	591,5	218,6	36,9
Тăвай	429,0	83,6	15,8
Улатăр хули	1.050,0	376,6	35,8
Канаш хули	566,0	226,2	39,9
Шупашкар хули	1.614,5	570,8	35,3
Пĕтĕмпе	19,284	5.0[illegible]7,6	26,0

Виççĕмĕш кварталă кĕнĕренпе пĕр уйăх та 20 кун иртрĕ. Çак тĕле илсен укçа-тенкĕ пухас плана çуррине ытла тултармала пулнă. Анчах та ĕç чăтма çук йапăх пырать. Августăн 21-мĕшне илсен плана 26 процент çеç тултарнă. Патăрйел, Йĕпреç, Ишлей, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Тăвай районĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре чăтма çук кайа йулса пыраççĕ.

Пулăшу илчĕ

ШĂХАСАН. Шăхальри „Гигант" ертелри Матренă Потапăвă колхозницăн 8 ача. Нумай ача амăшĕ шучĕпе Потапăвă иртнĕ çулта государстварăн 2 пин тенкĕ, кăçал 4 пин тенкĕ пулăшу илчĕ. Йышлă ача-пăчана пăхса ӳстерме пулăшнăшăн вăл вĕçĕмсĕр савăнать, хамăрăн партине, совет влаçне тата халăхсен аслă çулпуçне—Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн тав тăвать.

С. Ф.

Кашкăрсем асни

Йулашки вăхăтра Çĕрпӳ районĕнче кашкăрсем асса çӳреме пуçларĕç. Августăн 17-мĕшĕнче Хурăнсур колхозĕн хур фермине тапатă кашкăр кĕрсе, 30 хура пăвса кайнă.

Кашкăрсем ытти йалсене те пыркаланă. Анчах районра çак тискер-кайăксемпе кĕрешес ĕçе организацилемен.

А. Иванов.

Кашни киле хаçат пултăр

ÇĔМĔРЛЕ. Хаçат журнал сарас ĕç предприйатисемпе колхозсенче кунран кунах ӳссе пырать.

Кăçалхи çул Çĕмĕрле районĕнче хаçат-журнал çырăнса илекенсен йышĕ нумай ӳсрĕ. Июль уйăхĕнче районĕпе „Красньи Чувашия" хаçата 955 екземпльар, „Чăваш Коммунĕ" хаçата 503 екземпльар тата ытти хаçатсене те нумай сарнă. Август уйăхĕнче „Чăваш Коммунĕ", „Çамрăк больтевик" хаçатсене илекенсен йышĕ тата нумай ӳсĕ. Чăваш республикĕнче тухакан хаçатсене пурĕ 3463 екземпльар çырăнса илнĕ. Хаçат сарас ĕçре комсомолĕц Йегорăв йулташ тăрăшса ĕçлет. Анчах, Çĕмĕрле, Мыслец, Йандаш йалĕсем кайа йулса пыраççĕ. Çĕмĕрле йалĕнче 400 хуçалăх, анчах 4 кунта хаçат-журнал 30 екземпльар çеç çырăнса илнĕ. Çавăн пекех Мыслецпа Йандаш йалĕсем иккĕшĕ те 37 екземпльар кăна çырăнса илеççĕ.

С. Узин.

Профилактори çинчен

Сывлăха сыхлас ĕçре пирĕн медицинă чир йересрен сыхланас ĕçе пысăк вырăна хурать.

Паллах ĕнтĕ, нумай чирсенчен сыхланма май пур, сифилис тата гонорройă та çавнашкал чирсен шутне кĕреççĕ. Ку чирсенчен сывалма май пур пулин те, чире вăраха йарсан, чирленĕ çынсем сывалма нумай вăхăт хушши тата пĕр сиктермесĕр çӳремеле. Хăш-пĕр чухне тата ку чирсемпе чирленĕ çынсем вăхăтлăха ĕçлеймн те пулаççĕ. Чир йерниие пĕлсен, малтан 8 сехет иртиччен врачсем патне кайсан чиртен хăтăлса йулма пулать. 8 сехет хушшинчех чир сарăлса ĕлкĕреймест.

Венерикăлă чирсемпе кĕрешес тĕлĕшпе вĕсенчен сыхланас ĕçе каçхи профилактори туса пырать. Анчах ку учреждени чирлесех кайнисене сыватас ĕçе хăй çине илмест, чир йернĕ пуль тесе шутлакан çынна малтан 8 сехет иртиччен пулăшас, ăна чиртен сыхлас ĕçе тăвать, урăхла каласан—ку профилактикăлă ĕç пулса тăрать. Çавăнпа та ăна профилактори теççĕ. Нумай пулмасть Шупашкарти вендиспансер çумĕнче каç ĕçлекен профилактори уçăлнă. Каçхи профилакторине уçни венерикăлă чирсемпе кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакнашкал профилакторисем республикăри кашни район центрĕнчех уçма тăрăшмала.

Врач Е. Л.

Тӳрлетни

Августăн 11-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 184-мĕш №-чи „Чăваш орфографин тĕп правилисен пройекчĕ çинчен" статйа авторĕн йачĕ йăнăш пичетленнĕ. Автăр Йефремăв мар Йефимăв.

ВУЛАКАНСЕНЕ

Шупашкарти Водосвет типографине електроенерги паман пирки, хаçат икĕ страницăлă кăна тата кайа йулса тухрĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

„СПОТАРА" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ КАНТУРНЕ

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

бухгалтĕр-расчотчик

ТАТА

бухгалтĕр помошникĕ йе счетовод-картотетчик

КИРЛĔ

„СПОТАРА" ЙĔПРЕÇРИ ХĂМА САВĂТĔНЧЕ ĔÇЛЕМЕ

плановик-финансист

ТАТА

çекретар-машинисткă

КИРЛĔ

Ĕçунçи ниепĕшӳ тăрăх

Адрес: г. Чебоксары, Красноармейская ул., № 5, телефон 2—96.

ШУПАШКАРТА

Чапайĕв поçолкинче пасар плошчĕдĕнче

Кĕçĕн августăн 24-мĕшĕнчен пуçласа 29 мĕшĕнче

Ачасен пилĕккунлăх йармăрки пулать

Суту-илӳ организацийĕсем ачасене валли тĕрлĕрен промышленноç таварĕсем, учебниксем, шкул ачисене валли кирлĕ йапаласем, культурăлă таварсем тата ытти тĕрлĕ таварсем кӳрсе килеççĕ.

Шупашкар хула Совечĕн Суту-илӳ пайĕ.

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн хакĕ: пĕр уйăха 3 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подписккăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Главлитовский Уполномоченный № 548. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 663.